Chuvash - Agape Çырнинче - God's Love Letter Scriptures

Иоанн 15:9 Эпĕ сире Хама Аттем юратнă пек юратрăм. Манăн юратулăхăмпа пурăнăр.

Исаия 43:1,2 - Ефесри 2:10 Мĕншĕн тесен пире Турă çапла пултарнă: Христос Иисуспа пĕрлĕхлĕ туса, пире Хăй палăртнă ырă ĕçĕсене пурнăçламашкăн хатĕрленĕ.

Иеремия 1:5 - Галатири 1:15 Анчах та ырă кăмăллă Турă мана аннем варĕнчех суйласа илнĕ пулнă. Турă мана Хăйĕн Ывăлĕ камне уçса пачĕ, чăн Турра пĕлмен халăхсене Ывăлĕ çинчен Ырă Хыпар пĕлтерсе çŭреме мана Хăйĕн ырăлăхĕпе чĕнсе илчĕ. Ун чухне те эпĕ этемсенчен ăс ыйтма васкамарăм,

Иоанн 15:16 Эсир Мана суйласа илмен, Эпĕ сире суйласа илтĕм. Эпĕ сире, тĕнчене тухса, пĕтми çимĕç паччăр тесе суйларăм. Вара эсир Аттемрен Ман ятăмпа кирек мĕн ыйтсан та, Вăл сире парĕ.

3 Иоанн 1:2 Савнă тăванăм! Эпĕ санăн сывлăхушăн кĕлтăватăп, чуну ырăланса пынăçемĕн санăн пурне те ăнăçтарса пымалла пултăрччĕ тетĕп.

Исаия 43:4 - 1 Петр 2:9,10 Эсир вара – суйласа илнĕ халăх, Патша священникĕсем, сăваплă халăх, Туррăн çыннисем. Сирĕн тивĕçĕр – хăвăра тĕттĕмрен Хăйĕн чаплă çутине Чĕнсе илекенĕн тĕлĕнмелле ĕçĕсем çинчен хыпарласси. 10 Тахçан эсир те халăхах пулман, халĕ – Туррăн халăхĕ. Тахçан сире каçарман, халĕ – каçарнă.

Иеремия 31:3 - Ефесри 1:4 Вăл пире, Христоспа пĕрлĕхлисене, сăваплă та таса, юратуллă пурăнччăр тесе, тĕнчене пултаричченех суйласа илнĕ.

2 Тимофея 1:9 Турă пире ĕçĕмĕрсене кура мар, Хăйĕн шухăш-кăмăлĕпе, ырăлăхĕпе çăлнă, Хăйĕн халăхĕ пулма чĕнсе илнĕ. Вăл пире çав ырăлăха Иисус Христос урлă ĕмĕрсем пуçланичченех пама пулнă.

Иоанн 3:16 Тĕнчене питĕ юратнăран Турă Хăйĕн пĕртен-пĕр Тăван Ывăлне панă. Çакна Вăл ĕненекенĕсем пĕри те ан пĕтчĕр тесе, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулччăр тесе тунă.

Осия 11:8; Исаия 49:15,16; & Исаия 41:13,14 - Лука 12:32 Эй, пĕчĕк кĕтĕвĕм, ан хăра! Açăр сире Патшалăх пама кăмăл тунă.

Матфей 28:20 Вĕсене Эпĕ сире каланă пил-хушусене тытса пурăнма вĕрентĕр. Эпĕ тĕнче пĕтичченех куллен сирĕнпе пулăп». Аминь.

Иоанн 14:1 «Сирĕн кăмăлăр ан пăсăлтăр. Турра ĕненĕр, Мана та ĕненĕр.

Псалом 23:1 - Иоанн 10:11 Эпĕ – ырă кĕтŭçĕ. Ырă кĕтŭçĕ сурăхĕсемшĕн чунне парать.

Псалом 23:2 - Малашнехине 7:17 Мĕншĕн тесен престол умĕнчи Путек вĕсен кĕтŭçи пулĕ, вĕсене чĕрĕлĕх шывĕпе тапса тăракан çăлкуçсем патне ертсе кайĕ. Турă вĕсен куçĕнчи кирек епле куççульне те шăлса ярĕ».

Псалом 23:3,4 - Лука 1:79 Ырă кăмăллă та хĕрхенŭллĕ Туррăмăр тĕттĕмре, вилĕм тыткăнĕнче пурăнакансене çутатма, канăçлăх çулне кăтартма пирĕн пата çŭлтен Шурăмпуç çути ячĕ».

Псалом 23:5,6 - 2 Коринфри 1:10 Турă ун чухне пире, вилес патнех çитнĕскерсене, хăтарчĕ; халĕ те хăтарать. Эсир пирĕншĕн кĕлтусах тăрсан,

Турă пире малашне те хăтарасса шанатпăр. Вара, нумайăшĕн кĕллине илтсе, пире хĕрхеннĕшĕн нумай-нумай çын Турра тав тăвĕ.

Филиппăри 4:7 Вара Туррăн этем ăнланайми канăçлăхĕ Иисус Христосри пĕрлĕхре сирĕн шухăш-кăмăлăра упраса хăварĕ.

Ытарлăн 3:24 & Псалом 4:8 - Иоанн 14:27 Эпĕ сире канăçлăх парса хăваратăп, Хамăн канăçлăхăма сире паратăп. Анчах та вăл çак тĕнчери канăçлăх мар. Аптăраса ан ӳкĕр, ан хăрăр!

Псалом 33:18 - 1 Петр 3:12 Мĕншĕн тесен Хуçа Турă тӳрĕ çынсем çине пăхать, вĕсен кĕллине итлет. Усал тăвакансенчен вара вĕсене çĕр çинчен пĕтерес тесе Хуçамăр пăрăнать.

Рим 5:2 Ĕненĕве пула эпир Иисус урлă ырăлăх илтĕмĕр, çав ырăлăхпа пурăнатпăр; Турă мухтавне те илес шанчăк пурришĕн савăнатпăр.

Исаия 55:12 - Лука 19:40 «Калатăп сире, – тенĕ Иисус вĕсене хирĕç, – вĕсем шăплансан чулсем кăшкăрма пуçлĕç».

Иоанн 16:22 Çавнашкалах эсир те халĕ тертленетĕр. Акă Эпĕ тепĕртакран сире курăп та, сирĕн чĕрĕрсем савăнăçпа тулĕç. Çав савăнăça сирĕнтен никам та туртса илеймĕ.

Лука 12:9 Кам халăх умĕнче Мана пĕлмĕш пулать, ăна хăйне те Туррăн ангелĕсем умĕнче пĕлмĕш пулĕç.

Матфей 10:30 Сирĕн пуçăр çинчи çӳç пĕрчисем те пĕтĕмпех шутра.

Исаия 54:10 - Матфей 24:35 Çĕрпе пĕлĕт те пĕтĕ, Ман сăмахăмсенчен пĕри те пĕтмĕ. Песни Соломон 2:10 & Осия 2:14,19,20

Матфей 11:28-30 Эй, эсир, йывăр çĕклемпе халтан кайнисем! Пурте Ман патăма килĕр, Эпĕ сире канлĕх парăп. 29 Эпĕ йăваш та лăпкă кăмăллă, çавăнпа Ман туртам хушшине тăрăр, Манран тĕслĕх илĕр, вара канлĕхĕре тупăр. 30 Мĕншĕн тесен Ман лава туртма ырă, Ман çĕклемĕм çăмăл».

2 Коринфри 11:2 Эпĕ сире Турă кĕвĕçĕвĕпе кĕвĕçсе чунăма çунтаратăп, мĕншĕн тесен эпĕ сире пĕртен-пĕр ар валли – Христос валли – çураçрăм, сире Ун умне таса хĕр халлĕн тăратасчĕ тетĕп.

Исход 3:14 - Еврейсем 13:8 Иисус Христос ĕнер те, паян та, ĕмĕр-ĕмĕр – Çавах.

Осия 13:4 - Ĕçĕ-хĕлĕ 4:12 Эсир, çурт тăвакансем, юрăхсăр тесе ывăтнă чул никĕсри тĕп чул пулса тăчĕ. Çав чул вăл – Иисус. Урăх никам та çăлăнăç кӳреймĕ, мĕншĕн тесен çакă çутă тĕнчере çын панă ятсенчен пире çăлма пултаракан урăх ят çук».

Иоанн 15:14 Эпĕ хушнине туса тăрсан эсир Манăн тусăмсем пулатăр.

Иоанн 14:6 «Çул та, чăнлăх та, чĕрĕлĕх те – Эпĕ, – тавăрнă ăна Иисус. – Ман урлă каймасан Аттем патне никам та çитеймĕ.

Малашнехине 3:20 Акă, Эпĕ алăк умĕнче шаккаса тăратăп. Кам Манăн сассăма илтсе алăкне уçĕ, Эпĕ ун патне кĕрĕп те унпа пĕрле тăванлăх апачĕ çийĕп, Манпа пĕрле вăл та çийĕ.

Pastor T. John Franklin
Church of Salvation, Healing, and Deliverance
COS-HAD.org